**Çумăр умĕн**

Сулхăн. Хурăн айĕнче
Славик урамра тăрать,
Пĕр япала асăрхать:
«Тăнлă-ши вара вĕсем?...
Сивĕ çумăр çăвас умĕн
Çеçкисене çулçисемпе
Хуплаççĕ те хураççĕ,
Хĕвел шевли ăшăтмасăр
Куç хăёрпăкне уçмаççĕ».
Малтикасра пурнакан
Хĕр ача иртсе пырать:
– Анжелика, эсĕ паян
Ытла çӳхе тумланнă.
– Çанталăкĕ улшăнасса
Ирпе ăçтан шутланă?
– Шăннă сăмсу кишĕр пек,
Чирлесе ӳкен кун пек.
Ман пиншака уртса яр,
Хăвăртрах киле чуптар.
– Шапăртатма пуçласан
Таня патне кĕретĕп.
– Юрĕ, ăсатса ярам,
Юнашар чупса пырам.
Акă тăхăн, ан вăтан,
Ан вăтан, атту шăнан.

*Асамат, С. Çумăр умĕн / С. Асамат // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча вали çырнă хайлавсем. – С. 406-407.*